# Ф. П. ПАВЛОВ.

(1892—1931 ç.ç.)

Федор Павлович Павлов — талантлă драматург, ăста композитор, пысăк туйăмлă поэт. Чăваш литературине вăл пысăк пултарулăхпа çырнă драмăллă произведенисемпе пуянлатнă. Унăн «Ялта» драмипе «Судра» комедине массăллă сценăсем çинче халĕ те тăтăшах курма пулать.

Ф. П. Павловăн драмăллă произведенийĕсем автор, халăха çывăх тăрса, уйрăм çынсен чун-чĕрисене питех тĕрĕс уçса панине палăртаççĕ. Çавăнпа пĕрле вăл произведенисенче чăваш ялĕн революцичченхи пурнăçĕ таръннăн сăнланса юлнă.

**Ф. П. Павлов биографийĕ.** Федор Павлович Павлов Çĕрпÿ районĕнче (ĕлĕк Етĕрне уездне кĕнĕ) Патăръел ялĕнче 1892 çулта, сентябрĕн 13-мĕшĕнче, вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Иккассинчи (Шупашкар районĕ) икĕ класлă шкулта вĕренет, 1907 çулта Чĕмпĕр хулинчи чăваш шкулне кайса кĕрет. Вăл лайăх вĕреннине тата музыка тĕлĕшпе питĕ пултаруллă пулнине кура, шкултан вĕренсе тухнă хыççăн ăна çав шкулах ачасене музыка вĕрентме хăвараççĕ.

Чĕмпĕрте ĕçленĕ чухне Ф. П. Павлов «Нарспи» авторĕпе К. В. Ивановпа çывăх туслашать. Çакăнта вĕсен тăван искусствăна çĕклес тĕлĕшпе пысăк шухăшсем çуралаççĕ. Ку вăхăтра шкулта виçĕ хор ĕçленĕ: арçын хорĕ, хĕрсен хорĕ тата хутăш хор. Ф. П. Павлов арçын хорне ертсе пырать. К. В. Иванов шкулта спектакльсем лартма тĕрлĕрен декорацисем хатĕрлет, «Нарспи» поэма тăрăх опера тума Ф. П. Павлов валли либретто çырма шухăшлать. Çапла вара Ф. П. Павлов пуçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ творчество планĕсем çуралса тухаççĕ.

1913 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен вăйĕпех «Иван Сусанин» ятлă оперăна лартма хатĕрленсе çитеççĕ. Кунта Ф. П. Павлов тĕп рольсенчен пĕрне хăй вылять тата хăшпĕр действисенче дирижĕр пулса та ертсе пырать.

Чĕмпĕр шкулĕнче Ф. П. Павловăн нумаях ĕçлеме тивмест. Вăл духовнăй семинарине вĕренме кĕрет.

1916 çулта Ф. П. Павлов Етĕрне районĕнчи Кушлавăш ялĕнче, каярахпа Палтайри пуçламăш шкулта вĕрентет.

Октябрьти аслă социализмлă революцие Ф. П. Павлов пысăк хаваслăхпа кĕтсе илет. Революции малтанхи çулĕсенчен пуçласах, вăл общество ĕçне ĕçлеме тытăнать. 1917—1918 çулсенче вăл Шупашкар уездне кĕрекен Шемшер вулăсĕнче халăх судьи пулса ĕçлет.

Октябрьти революци хыççăн унăн вĕренес ĕмĕчĕсем тинех чăннипех пурнăçланаççĕ. 1918 çултах вăл Хусанти Çурçĕрпе Хĕвелтухăç енчи халăхсен археологи, истори тата этнографи институтне вĕренме кĕрет. 1920—1921 çулсенче Чăваш республикине таврăнать те Çатракассинче, унтан Хурамал ялĕнчи шкулта ачасене вĕрентет. Çав хушăрах вăл музыка ĕçне те пăрахмасть, ялта хор кружокĕсем организацилесе ертсе пырать.

Ф. П. Павлова часах Шупашкар уездĕнчи çутĕç пайĕ заведующийĕн заместителĕ туса хураççĕ. Каярахпа вăл Тутар республикинчи Çутĕç Комиссариачĕн искусство тĕлĕшĕпе ĕçлекен инструкторĕ, Чăваш секци пуçлахĕн заместителĕ пулса та ĕçлет.

Чăваш облаçĕ пулнă хыççăн Ф. П. Павлов Шупашкара куçса килет те Çутĕç пайĕн музыка уйрамĕнче ĕçлеме тытăнать. Кунтах педтехникумра юрăпа музыка ĕçне вĕрентет, хулара хор кружокĕсем организацилет. 1923 çулта педтехникумри Ф. П. Павлов ертсе пынă хор Мускаври ял хуçалăх выставкинче пулать.

1922 çулта Ф. П. Павлов «Ялта» драмине хăй укçипех пичетлесе кăларать.

1923 çулта Ф. П. Павлова Главсуд членне суйлаççĕ. Каярахпа вăл Çĕрĕç Комиссариатĕнче юрисконсульт пулса ĕçлет. Çав вăхăтрах музыка ĕçне те манмасть: халăх юрри-сăввисене пуçтарса, çĕнетсе йĕркелет, çĕнĕ юрăсем çыра́ть, хаçатсемпе журналсенче музыка ыйтăвĕсем тăрăх тĕрлĕрен статьясем пичетлет.

Сывлăхĕ начарланма пуçланă пулин те, Ф. П. Павлов хăй юратнă ĕçне пăрахмасть, — музыка техникумĕнче вĕрентет, концертсенче тăтăшах скрипкăпа тухать, хăй организациленĕ хор кружокĕсене ертсе пырать, республикăри Государство хорĕн аслă дирижĕрĕ пулса, унпа пĕрле тĕрлĕ облаçсене тата Чăваш АССР районĕсене концертсем пама кайса çӳрет.

Çак çулсенче вăл оперетта тата музыкăллă комеди çырма тытăнать. Ку ĕçре татах та пысăкрах пĕлӳсем илес тесе, вăл Ленинградри консерваторине вĕренме каять. Ленинградра та Ф. П. Павлов чăваш студенчĕсен хорне ертсе пырать.

Çак кунсенче унăн сывлăхĕ çав тери япăхса кайнă. 1931 çулта ăна Сочи хулине курорта туберкулĕз чирĕнчен сывалма яраççĕ. Анчах хавшаса çитнĕ организм йывăр чирпе текех кĕрешеймест. Июнĕн 2-мĕшĕнче Ф. Павлов Сочире вилсе каять.

**Ф. П. Павлов творчестви.** Ф. П. Павлов чăвашсен чи малтанхи драматургĕсенчен пĕри пулнă. Унăн драмăллă произведенийĕсем халăх пурнăçне тĕрĕс çутатса параççĕ, халăх шухăш-кăмăлне çывăх тăраççĕ. Драматург патша саманинче çынсем хушшинчи пурнăç тан мар пулнине, пуянсем чухăнсене кашни утăмрах хĕсĕрленине, улталанине çывăх курса тăнă. Çавăнпа вăл çырнă произведенисем ытларах иртнĕ саманари тертлĕ пурнăçа тата революцин малтанхи çулĕсенчи чăваш халăхĕн кун-çулне, йăлисене кăтартса параççĕ.

Ф. П. Павлов драматург çеç мар, ăста композитор та пулнă. Патша саманинче вырăс мар халăхсен музыка культури аталанма пултарайман. Чăваш юрри çырмара, вăрттăн сасăпа кăна янăранă. («Çырмари юрă» статья). Ф. П. Павлов çав юрра уççăн та хавассăн шăранма вăй паракансенчен пĕри пулнă. Вăл — чăваш халăхĕн чи малтанхи композиторĕ.

Ф. П. Павлов пуринчен ытларах халăх юррисене кĕвĕлесе илемлетме (гармонизацилеме) юратнă. Çакна май вăл чăваш халăх юррисене нумай пухнă, вĕсене кĕвĕлесе якатса, ӳйрăм кĕнекесем пичетлесе кăларнă. («Сăрнай», «Ача-пăча сасси», «Çĕнĕ сăрнай» тата ыттисем те). Халăх юррисене кĕвĕлесе йĕркеленисĕр пуçне, вăл хăйĕн кăмăл туйăмне палăртакан лирикăллă юрăсемпе вăйă-ташă кĕввисем те нумай çырнă. Ф. П. Павлов — çĕнĕ саманана мухтакан массăллă юрăсен авторĕ. Ку юрăсен шутне «Колхоз юрри», «Малалла утар», «Хĕрлĕ çара каякансен юрри» тата ыттисем те кĕреççĕ.

Ф. П. Павлов тăван халăх литературипе искусствине аталантарассишĕн ырми-канми ĕçленĕ: вăл музыка ыйтăвĕсем тăрăх статьясем, тĕрлĕрен калавсемпе фельетонсем, сăвăсем пайтах çырнă. Сăмахран, вăл «Вĕлле хурчĕ» тата «Тăпачă юрри» ятлă

юрăсен сăмахĕсене пысăк ăсталăхпа çырнă. Çак юрăсене халĕ те пĕтĕм халăх юратса юрлать.

**«Ялта» драма.** Ку драмăна Ф. П. Павлов 1922 çулта пичетлесе кăларнă. Драмăри ĕç империализм вăрçи вăхăтĕнчи чăваш ялĕнче пулса иртет.

Драмăн содержанийĕ çакăн пек: амăшĕнчен тăлăха тăрса юлнă чăваш хĕрĕ Елюк амаçури амăшĕпе — Пăрчăканпа пĕрле пурăнать. Вăл, Пăрчăкан ирĕкне пăхăнмасăрах, чухăн Ванюка качча тухать. Анчах та империализм вăрçи пуçланнипе вĕсене нумаях пĕрле пурăнма май килмест. Ванюка ытти çамрăксемпе пĕрле вăрçа илсе каяççĕ. Елюк хăйĕн савнă мăшăрне кунĕн-çĕрĕнех кĕтсе пуранать, уншăн кулянать. Елюк пурнăçĕнче инкек хыççăн инкек килсе тухать. Кĕçех унăн ачи вилет. Çитменнине ăна ял куштанĕ Çтаппан хăй енне çавăрасшăн çӳрет. Ял халăхне улталаса пурăннипе пуйнă Çтаппан нимрен те хăраса тăмасть. Вăл, Ванюк вăрçăра пĕтнĕ тесе, суя çыру çырать. Елюка кĕтмен çĕртен йывăр хуйхă килсе лекет. Вара вăл, чăтаймасăр, шыва сикет. Ăна вилĕмрен çăлса хăвараççĕ. Çтаппан, Муççа карчăкне укçа парса, Елюка хăй майлă çавăрттарать. Вăл Елюк умĕнчеултавлă сăмахсем каласа, хăйне çынна хĕрхеннĕ пек кăтартма тăрăшать. Юлашкинчен, Елюк пĕтĕмĕшпех Çтаппан серепине лекет те унăн арăмĕ пулма килĕшет.

Çтаппанпа Елюк туйне шăпах Ванюк хăй килсе çитет. Вăл малтанах Çтаппана тавăрма тăрать. Анчах Елюк ун патне каяллла пыма килĕшесшĕн мар. Çтаппанпа çапла пулса пĕтнĕ хыççăн мĕнле каялла пырам, ял мĕн калĕ, — тет. Вара Ванюк Елюка персе пăрахать. Çакăнпа драма вĕçленет.

1927—1928 çулсенче Ф. П. Павлов драмăн содержанине улăштарма, музыкăллă драма тума хатĕрленнĕ. Анчах, сывлăхĕ начарланнă тата ытти ĕçсем нумай пулнă пирки, вăл ку ĕçе вĕçнех çитереймен.

Автор империализм вăрçи вăхăтĕнчи ял сăн-сăпатне лайăх кăтартнă, анчах драмăра ĕненмеллех мар вырăнсем те пур. Сăмахран, Елюк хăйĕн амаçури амăшĕпе пурăннă Çтаппана качча тухма килĕшни. Империализм вăрçинчен революциллĕ шухăшсемпе тавăннă, ял куштанĕсене хирĕç кĕрешме кирлине чухлакан Ванюк, Çтаппана хирĕç вирлĕ кĕрешӳ пуçласа ярас вырăнне, хăйĕн юратнă мăшăрне персе пăрахни. Чăвашсен авалхи йăлисем тăрăх, пĕрре качча тухнă хĕрарăм иккĕмĕш хут туйпа качча кайма пултарайман. Ф. Павлов драминче Çтаппан Елюка туйпах качча илет. Ку ун чухнехи вăхăтшăн типлă явлени мар. Анчах автор ăна драмăра туй йĕркисене кăтартас, юрăсем ытларах кĕртес тесе, тепĕр енчен Çтаппан йышши пуян-куштансем нимĕне уяса тăми иртĕнсе кайнине кăтартас тесе çапла çырнă.

**Драмăри сăнарсем.** «Ялта» драмăн тĕп геройĕсем — Елюкпа Ванюк.

В а н ю к—чухăн çын ачи. Вăл мĕн пĕчĕкрен çынсем патĕнче ĕçлесе ӳснĕ. Çтаппан йышшисем ирсĕр ĕçсем тунине, халăх юнне

ĕмсе пуравнă пирки чухăнсен пурнăçĕ йывăр пулнине вăл пĕлет. Хайĕн пурнăçĕнче унăн çывăх çыннисем Елюк тата амăшĕ пур. Елюка вăл чĕререн юратать.

Ванюк — чухăнсен представителĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр нушара тертленсе пурăннă ял çыннисем Ванюкра çĕнĕ вăй вĕресе тăнине сисеççĕ. Вĕсен кăмăлĕ пĕтĕмпех ун енче. Вĕсене лайăх ăнлантарса, вĕрентсе пынă пулсассăн, вĕсем, паллах, Ванюкпа пĕрле тăрса, ял пуянĕсене хирĕç вирлĕ кĕрешĕве тухмалла.

Ванюк тĕрĕслĕхшĕн тăракан таса чĕреллĕ çын. Вăл тискер вăрçăра тăван çĕршывшăн юн юхтарнă. Вăл ял пуянĕсенчен хăрамасть, вĕсемпе кĕрешме кирлине те туять. Анчах мĕнле кĕрешмеллине тĕплĕн ăнланаймасть. Вăл тыткăна лекнипе революцилле ĕçсене те лайăхах хутшăнайман. Класс кĕрешĕвне йĕркеллех хатĕрленсе çитнĕ тип мар, вăл халăхпа пĕрлешсе, тĕрĕс кĕрешĕве тухма та ĕлкĕреймест. Вăрçăран аманса таврăннă хыççăн, вăл арăмĕн туйне лекет те, мăшкăла тӳсеймесĕр, алла пăшал тытать. Анчах чăн-чăн тăшмана — Çтаппана — пĕтерес вырăнне, кам айăплине тĕплĕн уйăрса илмесĕрех, хăйĕн юратнă мăшăрне пĕтерет. Çапла вара, Ванюк хăй çулне хăех пӳлсе хурать.

Е л ю к — тăлăх хĕр. Унăн тăван ашшĕ те, амăшĕ те вилнĕ. Çавăнпа та ăна пурнăçра никамран та пулăшу çук. Амаçури амăшĕ ăна шеллемест, кашни утăмрах сăмах тăвать. Пĕр Ванюк çеç ăна юратать, пĕр Ванюк çеç униăн чи çывăх та хаклă çын. Шухăшсемпе ĕмĕтсем пĕр пек пулни вĕсене пĕрлештерет.

Елюк çирĕп, ĕçчен хĕрарăм. Вăл упăшкине чун-чĕререн юратать. Упăшки вăрçăра чухне Елюк нумайччен Çтаппан ултавне парăнмасть. Анчах та вăл тĕттĕм çын, турă çырни, шăпа тенине ĕненекен хĕрарăм. Çтаппан Елюкăн тĕттĕмлĕхĕпе усă курать те ĕнтĕ. «Ванюк вилнĕ» тесе Çтаппан çырнă суя çырăва илнĕ хыççăн Елюк анрасах çитет те шыва кайса сикет.

Кунта каллех Çтаппан ултавĕ хăй ĕçне тăвать. Çтаппан Елюка: «Сан пурнăçна эп çăлтăм», — тесе улталать. Елюкшăн халĕ пурĕ-пĕр. Вилме турă çырман пулсан, Çтаппанпа та пулин пурăнасах пулать. Çавăнпа та вăл унăн арăмĕ пулма килĕшет. Çапла вара, ялти тĕттĕм хĕрарăм пуçне йывăр пурнăç тата ултавпа суя минретсех çитереççĕ. Ял кулакĕ Çтаппан мĕнле улталанине Елюк хăйĕн упăшки салтакран таврăннă хыççăн тин чухласа илет. Вăл ултав — пĕр Елюк инкекĕ çеç мар, çтаппансем пĕтĕм чухăнсенчен çапла мăшкăлласа пурăнаççĕ. Çакна туйса илнĕ пулин те, Елюк кивĕ йăла серепинчен тата Çтаппан влиянийĕнчен хăтăлаймасть, кĕрешӳ çулĕ çине тухаймасть.

Елюк сăнарне автор туллин кăтартнă.

Çак сăнар тăрăх ĕлĕкхи вăхăтра хĕрарăмсен пурнăçĕ мĕн тери тертлĕ те инкеклĕ пулни уççăнах курăнса тăрать.

Ванюкпа Елюк драмăри кăмăла килекен (положительнăй) сăнарсем. Драмăра автор кăмăла килмен (отрицательнăй) типсен сăнарне те кăтартса парать. Вĕсенчен тĕп вырăнта тăраканни — ял кулакĕ Çтаппан.

Ç т а п п а н — пуян çын. Вăл тахçантанпах халăх юнне ёмсе пураннă. Ку ĕçре ăна пулăшса пыраканĕ — мул. Хăйĕн ирсĕр тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес ĕмĕтпе вăл çынна сутма та, улталама та хатĕр. Пурнăçра унăн пĕртен-пĕр шухăш: чухăнсене ытларах хĕстерсе пуясси. Акă вăл хăйĕн мулне ÿстерес шухăшпах Пăрчăканпа пурăнма пуçлать.

Çтаппан аскăн, иртĕнсе кайнă çын, вăл Елюка та хăй аллине çавăрса илесшĕн. Çак ĕмĕте вăл тĕрлĕ ирсĕр меслетсемпе пурнăçласа пырать. Ванюк çартан таврăнни çеç Çтаппанăн çак шухăшне татса хурать.

Çтаппан сăнарĕ — тискер ял куштанĕсен сăн-сăпатне уçса паракан сăнар. Çтаппан ялти кулак, чăн-чăн эксплуататор. Вăл никамран та хăрамасть. Унăн вăйĕ укçапа пуянлăхра. Укçа пулсан, темĕн те тума пулать, тесе шутлать вăл,— ахальтен мар «укçа чул кастарать», тенĕ. Акă унăн Елюка хăй майлă çавăрмалла. Вăл кун пирки нумаях пуçа çĕмĕрсе тăмасть, хăйĕн ĕçне питĕ ăста тума вĕренсе çитнĕ евчĕ патне пырать те тÿрех енчĕкне шăнкăртаттарса кăтартать. Çăткăн Йăскарăн куçĕсем йăлкăшма пуçлаççĕ. Акă мĕнле сцена пулса иртет вĕсем хушшинче:

**Йăскар** (*аллине тăсса*). Пар тата, мĕн йĕкĕлтетĕн?
**Çтаппан** (*укçине кăларать*). Елюк хăçан ман пулать?
**Йăскар** Ы-ы... (*патне пырса.*) Итле, чăтас пулать кăштах.
**Çтаппан.** Урăх чăтăм çитмест.

Çтаппанăн чăтăм çитмест иккен! Вăл таса чĕреллĕ этем юратăвне хăвăртрах укçапа сутăн илесшĕн.

Ирсĕр чунлă Çтаппанăн çынсене хăйĕн серепине лектермелли тепĕр меслет пур, вăл — ултавпа суя. Вăл, Елюк хăйне нимĕнпе те парăнманнине кура, ăна «вилĕмрен сана эпĕ çăлтăм», тесе суеçтерет, Ванюк салтакра вилнĕ тесеултавлă çыру çырса парать. Ку ирсĕр ĕçе те Çтаппан хăйĕн хулăн енчĕкĕ пулăшнипе кăна тăвать.

Кирек хăш енчен илсе пăхсан та, Çтаппан ялти чи ирсĕр те тискер кулак. Çилли тулса çитнĕ чух вăл — кашкăр, екки килнĕ чух—чее тилĕ. Пĕр унăн аллине лексен, вĕçерĕнме ан та шутла. Çапла унăн чăн-чăн тискер кайăкăнни пек сăн-сăпачĕ.

Çтаппансен чуралăхĕнчен халăха кĕрешÿ çеç хăтарма пултарать. Çак шухăша «Ялта» драмăра автор уççăн кăтартса панă.

Й ă с к а р сăнарĕ те нумайччен асра юлакан сăнар. Йăскар укçашăн такама та сутма хатĕр. Ун шухăшĕпе этемшĕн чи хакли вăл — укçа. Укçа парсан, вăл улталама та, суйма та пултарать. Йăскар вăл хăйшĕн пурăнакан çын, уншăн пулсан ыттисен нуши, хурлăхĕ-хуйхи нимĕн те мар. Уншăн пулсан, çын шучĕпе ĕçсе-çисе, хăйĕн енчĕкне ытларах тултарса пултăр. Акă епле тăрăхласа кулать вăл айван ăслă тăлăх арăмран:

«Э, вăрманти тăмана. Пĕрре мар, çирĕм те ĕçтерĕн халĕ. Пĕлетĕп эпĕ сан шухăшусене, витĕрех куратап. Хĕре часрах хапатса кăларса, ху пĕччен хуçа пулса юласшăн эсĕ. Унтан вара упашка кертесшен. Ха, ватă кĕлетке

пулсан та, упăшкапа выляса пурăнасшăн. Çавă ĕнтĕ: мăнтăр темскер те тутарĕ. Хушăн пулсан, кирек мĕн хăтлан. Мана мĕн? Ман ĕçес те çиес, çийĕнчен укçа илес. Ах, паян пыр ярăнатчĕ-ха. Ĕнтĕ пехлетĕп»...

Муççа — ялти чухăн хресчен. Йăскар упăшки. Ун сăнарне автор иккĕленчĕк этем пек туса кăтартнă. Муççа малтанах кулаксен мăшкăлне, шăла çыртса тенĕ пек, пĕр чĕнмесĕрех тӳсет. Хăйĕн юхăнса кайнă хуçалăхне кăштах та пулин юсас тесе, вăл Çтаппан пеккисене юрама та тăрăшать, вĕсемпе пĕрле ĕçсе-çиме те хирĕç мар. Драмăри ĕçсемпе автор Муççа пек çынсен шухăш-кăмăлĕ, вĕсен вак буржуаллă туртăмĕсем мĕнтен килнине кăтартса парать. Муççа йышшисем, çтаппансем хыççăн кайса, вĕсен ĕçки-çикине ăмсанса, кăштах та пулин вĕсен укçитенкине чĕпĕткелесе илме пулмĕ-и тесе, вĕсене юрама тăрăшса, кулаксен юррисене те юрлама пултараççĕ. Муççа, Елюка усрава иленçи пулса, ăна хăйĕн хĕрне качча панă пекех Çтаппана качча парса аппаланни те çавнах кăтартса парать.

Ванюк вăрçăран таврăннине пĕлсен тин Муççан шухăшĕсем кăштах улшăнаççĕ. Халь вăл Елюка упăшки пур çинчех тепĕр çынна качча пани çав тери намăслă ĕç пулнине те ăнланать, ку ĕç ял кулакĕн ултавĕпе пулнине те сисет.

Муççа ял пуянĕсене хирĕç хăй ăссĕн тăма хăюлăх çитереймест. Унăн кăмăлĕ иккĕллĕ. Малтанах вăл кам вăйлă, ун еннелле туртăнса тăрать, каярахпа кăна унăн класлă ăс-тăнĕ ерипен çĕнелме пуçлать. Унăн шалти çилли, курайманлăхĕ те пур. Ăна вырăнтан хускатса яракан, тĕрĕс ертсе пыракан кирлĕ. Вара вăл ытти чухăнсемпе пĕрле кулаксене хирĕç вăйлă кĕрешĕве çĕкленме пултарать.

Йăскарпа Муççа питĕ интереслĕ те вăл вăхăтри хресчен пурнăçĕшĕн типлă сăнарсем пулса тăраççĕ. Йăскар хăй вăхăтĕнчи пурнăç законĕсене упăшкинчен лайăхрах вĕренсе çитнĕ, вăл законсем ун чунне те пăсма ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа та вăл суйма та, улталама та пултарать. Унăн чунне пĕтĕмпех укçана юратни пăнтăхтарса лартнă. Муççана, унпала танлаштарсан, çирĕплĕх çитеймест. Ял пуянĕсем чухăнсене мăшкăллани Муççана та шутсăрах тарăхтарать. Муççан пуянсене тавăрас килет. Чăнлăхшăн тăрас шухăшĕ те пур унăн, унсăрăн вăл туйра Ванюк майлă та часах çаврăнса ӳкмен пулĕччĕ-ха. Анчах та... кам пĕлет, çтаппансене ыр пулса пурăнни лайăхрах та усăллăрах-и тен? Акă мĕнле Муççан психологийĕ, шухăш-кăмăлĕ.

Ф. П. Павлов хăйĕн пьесинче пĕрремĕш империализмла вăрçă тапхăрĕнчи чăваш ялĕн сăн-сăпатне тата хресченсен психологине чылаях тĕрĕс уçса панă. Революцичченхи хресченĕн психологине тĕрĕс ăнланма кирлине В. И. Ленин пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. Хресчен нимĕнрен малтан харпăрлăхшăн тăракан çын, вăл собственник пулма тăрăшать, ăна пуринчен ытларах хăйĕн вак хуçалăхĕ интереслентерет. Çавăнпа та вăл пурнăçра пулса иртекен пысăк событисен сăлтавне тĕрĕс ăнланаймасть, общество тытăмĕ çине хăйĕн куçĕпе пăхать, кĕрешӳре хăйне валли тивĕçлĕ

çул хăвăртах тупаймасть. Вăл иккĕленет, хăйне тип шар пырса çапмасăр вырăнтан пит йывăррăн хусканать, ытларах йӳнеççемайлашса пурăнма тăрăшать. Унăн пурнăçĕ кăштах йĕркеллĕ пырать пулсан, вăл кĕрешӳ тавраш ĕçинчен шутламасть, йĕркерен тухсан, вăл пăлханма та, çапăçма та хатĕр, анчах тепĕр хут йĕркене лариччен кăна. Çавăнпа та ăна ертсе пыракан, ялан ӳркенмесĕр чăтăмлăн ăнлантарса паракан, тĕрĕс çул кăтартакан кирлĕ. Çавăн пек ăнлантарни çук пулсан, вăл хăйĕн паянхи кунĕшĕн ял куштанĕсем хыççăн кайма та хатĕр, — хуçалăхшăн усси кăна пултăр! Муççа ĕнтĕ пьесăра шăпах çавăн пек çын. Пулнă-и-ха Муççасене тĕрĕс çулпа ертсе пыракан? Çук, пьесăра эпир ăна курмастпăр.

Çавăнпа ĕнтĕ пьесăн тĕп геройĕ Ванюк та хăйĕн тăшманĕсене вĕсемпе пырса çапăнсан тин уйăрса илме пултарать, каллех пур чухне те мар. Вăрçа тухса кайиччен вăл хăйĕн юратнă Елюкне ял куштанĕ Çтаппан куç хывнине курать. Çавăн пирки Çтаппан уншăн тăшман. Çавăнтах Ванюк Çтаппан ялти çăткăн пуян пулнине аса илет те — вăл унпала «кĕрешме» те хатĕр. Вăрçăран таврăннă хыççăн Ванюк Елюк туйне лекет. Елюк пурнăçĕ çавăн пек пулса тухнин сăлтавне уншăн кам айăплине вăл ăнланаймасть. Уншăн пулсан ку ĕçре Елюк айăплă, ăна хăйĕн чун юратнă мăшăрех телейсĕре хăварнă, унăн ĕмĕтне туртса илнĕ пулать. Çавăнпа вăл Елюка вĕлерет.

Ванюк халлĕхе пурнăçа тĕплĕн ăнланаймасть. Пурнăç мăшкăлне хирĕç тăмашкăн Ванюкăн «вĕри вут пек çилли» те, «икĕ вăйлă алли» те пур, вăл кĕрешме те хатĕр, анчах кампа тата мĕнле кĕрешмеллине пĕлмест. Унан куçĕ халĕ тин уçăлма тытăннă-ха.

* * *

«Ялта» — пилĕк картинăллă драма. Кунта Ф. П. Павлов çав вăхăтри чăваш ялĕн сăн-сăпатне, унăн йăлисене тĕрлĕ енчен пултаруллăн сăнласа кăтартнă. Çамрăксен вăййисенчен, тунсăхлă сăпка юррисенчен, туй йĕркисенчен, чĕрене кайса тивекен салтак юррисенчен куç умне чăваш ялĕн йăлисем уççан та чĕррĕн тухса тăраççĕ.

Драмăна автор илемлĕ те яка чĕлхепе çырна. Драмăри персонажсем кашни хăйĕн расна чĕлхипе калаçаççĕ. Çакă вăл геройсен кашнин хăйне расна кăмăл-туйăмне лайăх палăртса парать.

Çапла ĕнтĕ «Ялта» драма империализм вăрçи вăхăтĕнчи чăваш ялĕнчи чухăнсен йывăр пурнăçне, ял пуянĕсем мĕнле иртĕнсе пурăннине, хресченсем сийленсе пынине, чăвашсем хушшинче революци умĕн класс кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пынине сăнласа паракан произведени пулса тăрать.

**«Судра» комеди.** «Судра» комедие Ф. П. Павлов 1917—1918 çулсенче çырнă. Пирвайхи хут вăл «Шурăмпуç» журналăн 6-мĕш номерĕнче (1919) пичетленсе тухнă. 1924 çулта автор, комедие тепĕр хут пăхса тухса, хăшпĕр вырăнсене тӳрлетнĕ.

Персонажсен характерĕсене уçса парас тĕлĕшпе те, вĕсен чĕлхи енĕпе те, содержанийĕпе те «Судра» комеди Ф. П. Павлов çырнă произведенисенчен чи лайăххи. Ăна пур енчен те пĕтĕмĕшпех туса çитернĕ комеди тесе шутламалла.

Комедин сюжечĕ кăткăс мар.

**«Судра» комеди содержанийĕ.** Вată Ухтеркке хăйĕн кинне, Сăпание, хăйне хĕсĕрленĕшĕн суда парать. Судра Ухтерккерен, Сăпанирен, каярахпа Катăк Çăварпа Крахъянран ĕç мĕнле пулни çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Анчах та суда свидетель пулса пынă Катăк Çăвар, ăна пула Каюра Крахъянĕ те, тĕрĕс кăтартман пирки, Ухтерккесен çемьинче пурнăç йĕркеллĕ пынă пек туха тăрать. Вара Ухтеркен ирĕксĕрех Сăпанипе килĕшме тивет. «Судра» комеди Ухтерккепе Крахъян, Сăпанипе Катăк Çăвар мăшăрланма калаçса татăлнипе вĕçленет.

Комедире çырса кăтартнă ĕçсем 1917 çулта февральти революци хыççăн, вăхăтлăх правительство вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Ĕлĕкхи чăваш ялĕнче Сăпани пек кинсем ватăсене хисепе хуманни сахал мар пулкаланă. Çавăн пек хирĕçÿсем пурри çитмен пурнăçран, тĕшмĕшлĕхе ĕненнинчен килет. Катăк Çăвар пек çынсем вата старихсемпе карчăксен тĕттĕмлĕхĕпе, хăюсăрлăхĕпе хăйсем майлă усă курма тăрăшнă. Ун чухнехи чăваш ялĕнче ухтерккесем те, сăпанисем те, катăк çăварсемпе крахъянсем те чылаях пулнă. Автор хăйĕн комедийĕнче çакна пысăк ăсталăхпа çырса кăтартнă.

**Комедири сăнарсем.** Комедири тĕп герой — Ухтеркке. Вăл патша Российинчи тискер саманана пула пурнăçран кая тăрса юлнă тĕттĕм старик, пакăлтатма юратаканскер. Унăн шухăшĕсем айван, тавракурăмĕ ансăр, çавăнпа вăл пĕр япала çинчен калаçнă çĕртенех темиçе çĕрелле сапаланса каять. Ухтерккерен судра кинĕ хăйне мĕнле хĕсĕрлени çинчен каласа пама ыйтаççĕ, вăл — хăйĕн юрринех юрлать:

— «Çаплах, ара, çаплах; аяккалла пăрăнмастап, еç çинченех калатăп. Пăрăнсан май килмерĕ вара вăл. Астумастăн-и, хăспатин миравай, Çавал арманĕнче, пĕлтĕр, хуçа мелникĕ пăрăс çинчен аяккалла пăрăннă та»...

Ухтеркен пĕртен-пĕр ĕмĕчĕ — çемьери вак-тĕвексенчен хăтăласси. Çак ĕçре вăл суд урлă пулăшу кĕтет. Анчах Сăпание вăл хуптарса лартасшăн мар, ăна хăйне çын вырăнне хурса хисеплекен çеç тăвасшăн.

**Миравай.** Апла пулсан, эсĕ ăна касамата хуптарас теместĕн-им?

**Ухтеркке.** Мĕ-ĕн? Касамата? Çук, çук, çу-ук! Касамат тесе çăварна та ан уç! Эсĕ ăна ахалех чар!..

Кунтан ĕнтĕ Ухтеркен ырă кăмăлĕ, унăн çилли нумая пыманни, вăл йĕркеллĕ çынпа яланах килĕштерсе пурăнма тăрăшни курăнса тăрать.

Ухтеркке сăнарĕ ĕлĕкхи самана çынсене пусмăрласа, тĕшмĕшлĕхре усранине, çавна май весем хайсен çемйинчи вак-тĕвек интерессенчен çӳле çеклеме пултарайманнине кăтартса парать.

Ку вăхăтра Катăк Çавар пек каппайчăк та вĕçкĕн, хăйсен уйрăм интересĕсемшĕн çеç тарăшакан çынсем те пулнă. Катăк Çăвар пуян çын мар. Çапах та унан еçме-çиме çитет. Вăл ухтерккесенчен, крахъянсенчен вайларах пурăнать. Акă мĕншĕн Крахъян пек хăравçă этемсем, вал аякран чавсапа тĕртнипех, тĕрĕссине каласа пама хăраççĕ.

Катăк Çăвар сан-сăпачĕпе автор патша саманинчи пурнăç çынна пăснине кăтартса парать. Катак Çăвар хăйне Ухтерккерен уйрăмрах тытать, вăл ытларах курса çӳрене çын, анчах вăл та нумаях малалла кайман. Каппайланать, выраслa пĕлмест пулин те, хăйне пĕлнĕ пек туса кăтартать. Ыттисем ăна хирĕç çăвар уçма хăраса тăраççĕ. Акă меншĕн вал, Ухтеркке пек çынсем хăйне «шăллăм» тесе чĕнсен, вĕсене хирĕç: «Камшăн пулсан шăллăм, сирĕн пеккисемшĕн пулсан, шăллăм мар, — я господин Герасим Федорович Криворотов второй» тесе касса татать.

Катăк Çăвар çынсене пурне те хăйне пăхăнтарма тăрăшать. Революциччен хĕрарăмăн пурнăçĕ питĕ йывăр пулнă. Вăл вĕренме, пурнăçра хăйне тивĕçлĕ вырăн тупма пултарайман. Ăна çемьере те хĕсĕрленĕ, мĕн ачаранпах аслисене пăхăнса пурăнма вĕрентнĕ. Ф. П. Павлов хăйĕн комедийенче Крахъян санаре урлă çавăн пек типсенчен пĕрине кăтартса панă.

Каюра Крахъянĕ — тĕшмĕшлĕ пурнăç терчĕпе анраса, мĕскĕнленсе юлнă тĕттĕм хĕрарам. Арçынăннипе пĕр тан мар йывăр шăпи ăна этемĕн тивеçесене туйса илейми тунă. Вăл ниçта та тухса çӳремен, судра пулса курман. Хăйне вăл мĕскĕннĕн те хăравçăллăн тытать, çынсемпе шикленсе кăна калаçать.

— Агрипина Каюрина эсĕ пулатăн-и?—тесе ыйтаççĕ унран судра.

— Эпех пулĕ терĕм. Килте те Крахъян тетчĕç те...—тесе тавăрать вăл именчĕклĕн.

— Тух калла! — хушать ăна миравай, свидетельсен суд заседанине хăйсен черечĕ çитмесĕр кĕме юраманнине систерсе.

— Ман киле каяс-и-мен апла? мен тумаллине анланаймасть Крахъян. Суд йеркине аçтан пĕлтер енте вăл, çулталăкра та ялтан виççĕрен ытла тухса курман мескен херарăм?

Крахъян судра хăйен суйи тухассинчен мар, Катак Çавара юраймассинчен ытларах хăрать. Çавăнпа вăл, самаха тĕрĕс каламa тăнă çĕртенех, Катăк Çăвар хăйне чавсипе тертсен, курнилтнине шат та пат тунса лартать.

— Крахъян, эсĕ виçĕмкун урамра татан-и? ыйтаççе унран.

— Татăм, — тет вăл малтан, нимĕн пытармасар. — Катăк Çăварпа иксĕмĕр тараттăмăр эпир...—Катак Çавар Крахъяна чавсинчен хытă туртать. Вара ĕç пачах урахла май çаврăнса каять:

— Крахъян, куртăн-и эс ашшĕне Сăпани тислĕкпе пенине?

— Çу-ук, курман! Пĕлместĕп эпĕ нимĕн те.

Халĕ ĕнтĕ Крахъяна «майран шăршлă вĕренпе кăкарсан та» урăх нимĕн те калаттараймăн: «Курман!»—ĕçĕ те пĕтрĕ. Крахъяншăн урăхла майĕ те çук, мĕншĕн тесен, судра вăл — пĕр-ик сехетлĕх, ялта ĕмĕр пурăнмалла. Хăй майлă кăтартмасан, Катăк Çăвар ăна пурпĕр кун парас çук...

Çапла ĕнтĕ пусмăрлă пурнăç анратса, минретсе, мĕскĕнлентерсе хăварнă тĕттĕм чăваш хĕрарăмĕн хăравçă та шиклĕ чунĕчĕри.

Сăпани — тăлăх арăм. Унăн упăшки, Ухтеркке ывăлĕ, вăрçăра вилнĕ. Пĕтĕм çемьери ĕçсем Сăпани çинче тытăнса тăраççĕ. Ухтеркке, ватă пирки, ăна кирлĕ таран пулăшаймасть. Çавăнпа та ĕнтĕ çитмен пурнăç, тĕттĕмлĕх, сăмах килĕшменни Сăпание Ухтерккепе хирĕçтерет. Ку вăл — уйрăм хуçалăхран тухса тăнă хирĕçӳ. Сăпани сăнарĕ уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресчен сăнсăпатне кăтартса парать.

«Судра» комедире кашни персонажăн характерне туллин те чылай енчен илсе кăтартнă. Ку тĕлĕшпе вăл тĕрлĕ мелсемпе усă курнă. Комедири кашни геройăн чĕлхи хăйне расна. Вĕсем пĕрпĕринпе нумай енпе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсен калаçăвĕ тăрăх эпир кашни геройăн характерне, культурăллă шайне пĕлетпĕр. Вĕсене нимĕнле те пĕрлештерсе пăтраштарма май çук.

«Судра» комедие юморпа анлăн усă курса çырнă. Персонажсен калаçăвĕнче кулăшла вырăнсем туллиех. Анчах та ку ансат кулăш çеç мар. Персонажсем чăкăлташса хирĕçнинчен тăрăхласа кулнипе пĕрлех, вĕсене хĕрхенес те килет, мĕншĕн тесен вĕсем пурнăç условийĕсене пула çапла тĕттĕмлĕхе тăрса юлнă. Пурнăçпа йăла тĕшмĕшĕ вĕсене çапла мăкăлтаса хăварнă.

Ф. П. Павлов хăйĕн комедийĕнче кивĕ пурнăçран упранса юлнă йăласене, тĕшмĕшлĕхе хирĕç кĕрешме, çынсене тĕрĕс пурнăç çулĕ çине тухма чĕнет. Çĕнĕ саманара кивĕ йăласене тытса пыракан тĕттĕм ухтерккесем, крахъянсемпе сăпанисем, хăйсене пысăка хурса каппайланакан катăк çăварсем кирлĕ маррине автор витĕмлĕн çутатса панă. Çавăнпа вăл кив тĕнче юлашкийĕсене тĕп туса, комедире кăтартнă пек çынсене çĕнĕ саманана тивĕçлĕ граждансем пулма чĕнет.

* * *

Çапла ĕнтĕ, Ф. П. Павлов чăваш литературипе музыкин историнче тивĕçлипех пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл литературана паха произведенисемпе пуянлатнă, тăван искусствăна аталанма пулăшнă, Ф. П. Павловăн пьесисем пире Октябрьти революци умĕнхи чăваш ялĕн пурнăçĕпе, ялти тĕрлĕ классен представителĕсемпе паллаштараççĕ. Ф. П. Павловăн сăвви-юррисем этемĕн ырă туйăмĕсене палăртса тăраççĕ, çĕнĕ саманана мухтаççĕ, пурнăçа юратма чĕнеççĕ. Çакăнта ĕнтĕ Ф. П. Павлов творчествин идейăллă пĕлтерĕшĕпе художествăллă пахалăхĕ.